20-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 4 ВЫРСАРНИКУН 73(6310) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕ ятарласа пĕлтерни

Хĕрлĕ Çарăн хĕллехи кампанийĕн итогĕсем

(1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи мартăн 31-мĕшне çитиччен)

Кăçалхи мартăн 31-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç туса пыракан хĕллехи кампание вĕçлерĕ.

Хĕллехи кампани вăхăтĕнче совет войскисем тăшмана çаресене вăрçă пуçланăранпа йывăр поражениисем тÿстерчĕç. Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене Сталинград патĕнче историре пĕр чи пысăк поражени тÿстерĕ, нимĕç войскисене Çурçĕр Кавказра тата Кубаньре çапса аркатрĕ, тăшмана Донăн вăтаçĕрти районĕнче чылай пысăк йывăр поражениссем тÿстерĕ, Центральнăй фронтра (Ржев—Гжатск—Вязьма районĕсенче) тата Демянск районĕнче тăшманăн плацдармĕсене пĕтерсе тăкрĕ, Ленинград блокадине татса çĕмĕрĕ.

Тăватă уйăх та 20 кун хушши наступлени туса пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çар хĕллехи питех те йывăр условисенче хăшпĕр участоксенче 600—700 километр хĕвеланăçнелле кусрĕ. Совет войскисем 480.000 тăваткăл километрлă çавтери пысăк территорие нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç. Хĕрлĕ Çар наступлени туса пынипе çĕршывăн экономика тата вăрçăра стратеги тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ районĕсене тăшмантан тасатнă. Воронежпа Сталинград облаçĕсене, Чечено-Ингуш, Çурçĕр-Осетин, Кабардино-Балкар тата Калмык автономлă республикисене, Ставрополь крайне, Черкес, Карачай тата Адыгей автономлă облаçĕсене пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă, Краснодар крайне, Ростовпа Курск облаçĕсене пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех ирĕке кăларнă, Ворошиловград, Смоленск тата Орел облаçĕсен чылай пысăк пайне ирĕке кăларнă, вуншар пысăк хуласемпе нумайшар пин ялсене ирĕке кăларнă.

Хĕрлĕ Çар, тăшмана Хĕвеланăçнелле сирсе ывăтса, çĕршывăн питех те кирлĕ шывçулĕсене тата чугунçулĕсене ирĕке кăларнă, вăл шутра Атăл шывĕн çулне, тăшман 1942 çулта кĕркунне татнăскере, тасатса йĕркене кĕртнĕ, Дон шывĕн мĕнпур тăрăхне тăшманăн войскисенчен тасатнă. Çакăн пек чугунçул магистралĕсене: Сталинград—Поворино, Сталинград—Лихая—Ворошиловград, Сталинград—Краснодар, Владикавказ—Дон çинчи Ростов, Лиски—Миллерово—Шахты—Дон çинчи Ростов, Елец—Касторная—Валуйки—Ворошиловград, Мускав—Вязьма, Мускав—Ржев—Великие Луки тата ытти нумай тĕрлĕ чугунçулсене тăшмантан ирĕке кăларса пĕтернĕ.

Хĕрлĕ Çар 1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи мартăн 31-мĕшне çитиччен наступлени туса пынă вăхăтра пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 1.490, танксем — 4.670, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 15.860, минометсем — 9.835, пулеметсем — 30.705, винтовкăсем — 500.000 ытла, снарядсем — 17 миллион, патронсем — 128 миллион, автомашинăсем — 123.000, паровозсем — 890, вагонсем — 22.000, тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсем — 1.825, çавăн пекех тата радиостанцисемпе мотоциклсем тата ытти чылай тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ.

Çав вăхăт хушшинче пирĕн войскăсем тăшманăн 3.600 самолет, 4.520 танк, 4.500 орудине ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ.

Пирĕн войскăсем хĕллехи вăхăтра наступлени туса пынă хушăра противникăн пĕтĕмпе 5.090 самолет, 9.190 танк, 20.360 орудие сухатнă.

1942 çулхи ноябрĕн 10-мĕшĕнчен 1943 çулхи мартăн 31-мĕш хушшинче тăшманăнне 343.525 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 850.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пĕтнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 2-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче тăшманăн пĕтĕмпе 15.000 тонна водоизмещениллĕ икĕ транспортне путарнă.

* * *

Апрелĕн 1-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтсе янă, тăшманăн 10.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр чаçăн боецĕсем, тăшман вăйлăн персе тăнине сирсе пăрахса, нимĕçсене пĕр пысăк опорнăй пунктран сирпĕтсе кăларнă. Артиллерин 2 батарейине, минометсен 3 батарейине тата тăшман пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра тăшман çине персе тăнă. Пĕр чаçăн артиллеристсем ăнăçлăн персе тăшманăн 300 çынна çити шутланакан пехота колоннине пĕтерсе тăкнă е саланса янă. Тепĕр участокра совет артиллеристсем тăшманăн 2 артиллери батарейине, ултă кĕпçелĕ миномечĕсен батарейине пусарнă, тăшманăн 8 дзотне блиндажне аркатса тăкнă. Пĕр чаçăн снайперсем пĕр кун хушшинче 74 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă тата тăшман атакисене сире-сире пăрахнă. Пĕр участокра нимĕç пехоти танксем пулăшнипе наступлени тунă. Пирĕн соединении боецĕсем гитлеровецсен атакисене сирсе пăрахнă, вĕсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Çапăçусем малтанхи рубежсенче пыраççĕ.

* * *

Фронт участокĕсенчен пĕринче СССР-та йĕркеленĕ чехословаксен çар чаçĕ ăнăçлă кĕрешет, ăна полковник Свобода ертсе пырать. Н. хулинчен боецĕсем нимĕçсен 60 танк пулăшнипе атака тунă. Чехословаксем пĕр талăк хушши хастарлăн кĕрешсе пырса, гитлеровецсен пур атакине те сирсе пăрахнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 400 нимĕç автоматчикне çити пĕтерсе тăкнă. Чехословаксен çар чаçĕн тепĕр подразделенийĕ нимĕçсен танкĕсемпе çапăçнă. Совет гвардеецĕсемпе пĕрле кĕрешсе пырса, чехословаксен чаçĕнчи боецсемпе командирсем нимĕçсен 3 танкне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн çыннисене нумай вĕлернĕ, командованин лартнă боевой задачине пурнăçланă.

* * *

Тăшман авиацийĕ Батайск хули çине бомбăсем персе тапăнма хăтланнă. Совет истребителĕсем тăшман çулне пÿлсе хурса, çывăхри çапăçусенче нимĕçсен 4 бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй экспедицийĕпе çапăçса 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Мартăн 14-мĕшĕнче Минск партизанĕсем тăшманăн çар эшелонне хăюллăн пырса тапăннă. Совет патриотсем паровоза тата класлă 10 вагона пĕтерсе тăкнă. Пăшалпа пулеметсенчен персе тăшманăн 130 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Партизансем енне тăшманăн хурал тăракан чаçĕсенчи словак салтакĕсен пĕр группи куçнă. Словаксем çапла калаçнă: «Эпир, словаксем, резерври дивизин салтакĕсем, Белоруссире тăраттăмăр, унта эпир чугунçул линисене, кĕперсене тата ытти объектсене хуралланттăмăр. Вырăнти совет çыннисене нимĕçсем тĕрлĕ преступленисем туса çав тери тискеррĕн асаплантаратчĕç. Чехсемпе словаксен нимĕçсемпе пĕр çулпа пыма юраманнине эпир пĕлсе çитрĕмĕр. Эпир вĕсене ялсем çунтарма, пĕр айăпсăр ачасене, хĕрарăмсене тата ватăсене персе пăрахма пулăшасшăн мар. Славян халăхĕсен аслă çемьи ывăлĕсем пулса, эпир партизансем енне куçрăмăр та вĕсемпе пĕрле инçетри тылра нимĕçсене пĕтеретпĕр, фашистла захватчиксене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшса пыратпăр. Кунта, Белоруссире, славянсене фашистла чуралăхран ирĕке кăларассишĕн, никама пăхăнман ирĕклĕ Чехословакишĕн кĕрешетпĕр».

* * *

Югослави партизанĕсем Гламоч, Невесине тата Калиновик хулисене йышăнса илнĕ. Невесине хулине хÿтĕлекен итальянецсен гарнизонне аркатса тăкнă, унăн юлашкийĕсем йĕркесĕр каялла чакнă. Патриотсем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Лозинац местечки патĕнче пынă хаяр çапăçусенче гитлеровецсен 300 ытла салтакпа офицер вилнĕ е аманнă. Партизансем 3 нимĕç танкне, 2 орудине тата ытти хĕçпăшалсене тытса илнĕ. Кониц хули патĕнче партизансен укреплениине шăтарса кĕме тăшман хăтланни ăнăçсăр пулнă. 35 кун хушши партизансем тăшман тунă нумай атакăсене ăнăçлăн сиресире пăрахса, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Югослави патриочĕсемпе кĕрешес ĕçре ăнăçлăх тăваймасăрах вара оккупантсен каялла чакмалла пулнă.

Апрелĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Апрелĕн 3-мĕшĕ ыран (тенĕ чух) çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче тăшман отрячĕ пирĕн оборонăн малти хĕрри патне пыма хăтланнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен персе, гитлеровецсене сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче нимĕçсем пирĕн пĕр часть хÿтĕлекен позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем тăшманăн атакисене сирсе янă, нимĕçсен пĕр танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппине тата 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пехотăн хĕçпăшалĕпе персе противникăн бомбардировщикне ÿкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллеристсемпе минометчиксем тăшманăн 8 дзотне ишĕлтернĕ, артиллери батарейине тата минометсен батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Анастасиевская районĕнче противникран 250 автомашина, 25 трактор тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсем уйрăмах вăйлăн хирĕç тăнă. Пирĕн артиллеристсем темиçе орудие уçă позицие илсе тухнă та тĕл персе тăшманăн темиçе дзотне аркатса тăкнă. Артиллери пенипе хÿтĕленсе совет боецĕсем çав пункта вăркăнса кĕнĕ те ăна хÿтĕленĕ нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 вилли таран выртса юлнă. Пирĕннисем 3 оруди, 22 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ мартăн 18-мĕшĕнче нимĕçсен карательнăй отрядне аркатса тăкнă. Çав отряд мирлĕ пурăнакан совет çыннисене асаплантарса, вĕлерсе çÿренĕ. Партизансем 18 гитлеровеца вĕлернĕ, 23 гитлеровеца амантнă. Тепĕр отрядри партизансем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем ларса пыракан 4 автомашина пĕтерсе тăкнă. 3 автомат, 35 винтовка тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 321-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен темиçе ушкăнĕ тыткăна параннă. 588-мĕш полкри тыткăна парăннă салтак Станислав К. çапла каласа панă: «Декабрь уйăхĕнче нимĕç войскисене Францирен Российăна йышлăн яма тытăнчĕç. Çакна Хĕвелтухăç фронтĕнче нимĕç çарĕн ĕçĕсем ăнăçман пирки тунине эпир сиснĕ. Часах Булоньре тăракан пирĕн дивизие те Хĕвелтухăçне ячĕç. Салтаксен шухăш-кăмăлĕсем сасартăк начарланса кайрĕç. Нацистсем те сахалтарах мăнкăмăлланма пуçларĕç. Нумайĕшне çакă паллă пулса тăчĕ: 1942 çулта пысăк çухатусем тÿснĕ пулин те, нимĕç çарĕ нимĕнле ăнăçусем те тăвайман. Нимĕçсен чылай дивизийĕсене Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкнă. Германин Кавказри нефте тытса илес пĕтĕм шанчăкĕ пĕтсе ларнă, çав нефть çине питĕ хытă шанса тăнăччĕ. Нимĕç войскисем Центральнăй фронтра каялла чакни салтаксене пĕтĕмпех тĕлĕнтерсе ячĕ. Хамăр пурнăçа сыхласа хăварас тесе, пирĕн ротăри салтаксен пĕр ушкăнĕ хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăнчĕç».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсен фашистла войскисем ялсене çунтара-çунтара яраççĕ. Мирлĕ çынсене гитлеровецсем вăйпа тыла хăваласа каяççĕ е вĕсене персе вĕлереççĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Леоново ялне нимĕн хăвармиччен çунтарса янă. Вутра 140 кил, больница, шкул тата хуçалăх хуралтисем пурте çунса кайнă. Фашистла пуçкасакансем Иванисово ялĕ патĕнчи вар патне таврари ялсенчи çынсене хăваласа пухнă та вĕсене автоматсемпе пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Персе вĕлернисем хушшинче хĕрарăмсемпе çамрăк ачасем нумай пулнă.

Укерчĕк çинче: пирĕн земляк — старши политрук К. Кузнецов. Вăл П. тата К. ялĕсемшĕн пынă çапăçусенче 60 гитлеровеца вĕлернĕ. Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче хастарлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата «За отвагу» медальпе награадăланă. Хĕрлĕ Çара каяччен К. Кузнецов юлташ ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн инструкторĕ пулса ĕçленĕ.

ФРОНТОВИКСЕН ÇЕМЬИСЕНЕ ПУЛĂШАТПĂР

Мартăн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче Çĕмĕрле районĕнче çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăх пулса иртрĕ. Çак вунăкунлăх совет патриотизмне вирлĕн кăтартса пачĕ, вăл политикăллă пысăк çĕкленÿпе иртрĕ.

Вунăкунлăх чылай пысăк результатсем пачĕ. Çав вăхăт хушшинче Çар çыннисен чылай çемьисене пулăшу панă. Малтанлăха илнĕ сведенисем тăрăх, пирĕн районри колхозсенче кăна боецсен çемьисене 4.000 килограмм çĕрулми, 1.500 килограмм çăнăх, 550 килограмм пăрçа, 1.700 килограмм купăста валеçсе панă. Пирĕн районра 2.400 тумтирпе атă-пушмак валеçсе панă, 1.227 çемьене вутă туянтарнă, 200 витре, 300 тобуретка, 90 сĕтел, 150 пукан валеçнĕ. Çар çыннисен çемьисене 25 хваттер çĕнĕрен панă, 16 хваттере юсаса панă.

Вунăкунлăх пуринчен ытла Буденный ячĕпе хисепленекен колхозра, лесхозра, леспродторгра тата комбинатра аван иртнĕ. Буденный ячĕпе хисепленекен колхоз, сăмахран, фронтовиксен çемьисем валли 1.500 килограмм çĕрулми, 250 килограмм çăнăх, 100 килограмм пăрça, 3 сурăх, 1 качака уйăрса панă. Фронтовик арăмне Моисеева Екатерина колхозницăна «Комбинат» колхоз ĕне панă.

Çĕмĕрле комбинатĕнче фронтовиксен çемьисене пулăшма 11.500 тенкĕ укçа, 65 килограмм çу, 5 тонна купăста, пĕр тонна хăяр, 1000 килограмм çĕрулми, 480 хĕрарăм кĕпи, 150 метр мануфактура, 36 мăшăр çăматă, 50 кубометр вутă панă, 24 пукан, 50 тобуретка тата 10 сĕтел туса хатĕрленĕ.

Лесхоз коллективĕ вунăкунлăх хушшинче 100 кубометр вутă хатĕрленĕ, 7 çемьене выльăх апачĕ тупса панă. Çар çыннисен çемьисене кунта 5 пăт çĕрулми, 2 пăт ыраш çăнăхĕ тата пĕр пăт тулă çăнăхĕ, 4 мăшăр çăматă, 30 метр мануфактура панă.

Анчах хăшпĕр вырăнсенче, сăмахран, чугунçул станцинче, горторгра, Пуяндайкин ялсоветĕнче вунăкунлăх хушшинче нимĕнле татăклă ĕç те туман. Çав организацисенчи руководительсем фронтовиксен çемйисен пурнăçĕпе сахал интересленеççĕ.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче тунă ĕçсем вĕсем Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçакан фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Вунăкунлăх иртнĕ хыççăн та фронтовиксен çемйисене пĕрмаях пулăшса тăмалла.

Пирĕн паттăр боецсемпе командирсем, вĕсен çемьисемшĕн пĕтĕм халăх тăрăшнине курса тăрса, тăшмана хирĕç тата вирлĕнрех кĕрешчĕр.

А. Кудашов,
ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

ИШЛЕЙ. Фронтовиксен çемьисемпе вăрçă инвалидĕсене пулăшма „Авдан" колхоз колхозникĕсем кĕске вăхăтрах 300 пăт ытла тырă, 4 метр çăм тăла, пĕр мăшăр ботинка пухрĕç. Колхозран вĕсене 17 пуç сысна çури валеçсе пачĕç. Тата вĕсем валли 64 кубометр вутă касса турттарчĕç.

И. Волков.

Колхозсем çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслетпĕр

Палăртнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пыраççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, апрелĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). «Культура» колхозра ялхуçалăх машинисене çирĕп юсаманни курăннă. Комисси машинăсене юсама тимĕрçе чĕнтернĕ. Плугсене, сÿресене халех тепĕр хут тÿрлетме хушнă. «Красный воин» колхозра вăрлăхсене таса мар сортланă. Комисси колхоз правленине вăрлăхсене сортлама колхозниксене çийĕнчех чĕнтернĕ. Икĕ кун хушшинче колхозниксем комисси кăтартса панă вăрлăхлăх тырра триерпа сортласа пĕтернĕ.

Районра чылай колхозсем çуракине тĕплĕн хатĕрленни курăнать. Вĕсен ĕçне комиссисем тивĕçлĕ хак параççĕ.

МТС çуракине хатĕрленнине тĕрĕслесе тухнă хыççăн пысăк çитменлĕхсем курăннă. Тĕслĕхрен, Тукаев бригадир пулса ĕçлекен трактор бригади ялхуçалăх машинисене тата хăшпĕр тракторсене те çиелтен çеç юсанă. «УК» маркăллă культиватор юсавлă шутланать, анчах унăн кронштейнне çирĕплетмен, ларса ĕçлемелли вырăнĕ çук. Çавăн пекех 28-мĕш номерлĕ урапаллă тракторăн кăлтăксем те пысăк. Картертан çу юхать, радиатор болчĕсем, динамо, фарăсем çук.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене пуринчен те лайăх тата пысăк ответлăхпа Асеинов юлташ ертсе пыракан бригада юсанă. Ку бригадăн тракторĕсемпе ялхуçалăх машинисенче нимĕнле çитменлĕх те çук. Степанов ертсе пыракан 5-мĕш номерлĕ бригадăра та çавăн пекех.

Çураки тума тухас вăхăт çитиччен кашни колхоз комиссисем палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе акана тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле.

А. Алексеев,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Тĕплĕн хатĕрленсе çитмен-ха

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, апрелĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуракине хатĕрленсе çитнине тĕрĕслеме Чапаев ячĕпе тăракан колхоза комисси пычĕ. Комиссие ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ Спиридонова юлташ ертсе пырать, ку комиссире ăмăртса ĕçлекен Энгельс ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Кашин тата унти бригадирсем, шкул директорĕ коммунист Назаров юлташсем тăраççĕ.

Чи малтанах колхозра уйрăм культурăсен вăрлăхĕсем çитменни палăрчĕ. Вир, хура тулă, клевер вăрлăхĕсем акма çитмеççĕ. Пăрçан шăтас пахалăхĕ 86 процент çеç. Колхоз правленийĕ ăна лайăхраххипе улăштарса илме палăртнă, анчах халĕ те улăштарман. Комисси вăрлăх хатĕрлесе çитерес ĕçе колхоз правленине апрелĕн 5-мĕшĕччен вĕçлеме хушрĕ.

Колхоз уя тислĕк кăларас плана тултарман. Апла пулин те халĕ ку ĕçе куллен туса пымаççĕ. Çавăн пекех колхозăн чылай лашисем çуракине тухма хатĕр мар, 40 лашаран 5-шĕ çеç вăтам ÿт-пÿллĕ. Анчах вĕсене лайăхрах тăрантарассишĕн тăрăшмаççĕ-ха.

Тĕрĕслÿ колхоз правленийĕ организациллĕ ĕçсем енĕпе те кая юлса пынине кăтартрĕ. Çуркуннехи ĕçсен планне халĕ те туман, ĕç вăйне вырнаçтарса тухман, хăш участока мĕнле тырă акасси те паллă мар.

Çакăн пек çитменлĕхсене курнă пулсан та комисси «колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ» тесе хак панă, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçе çийĕнчех организацилесе хăварман. Çакă ĕнтĕ вăл ĕç çине çиелтен пăхни, çитменлĕхсемпе килĕшни пулать. Комиссисем тĕрĕслÿ ĕçне организациллĕ ĕçпе сыхăнтарса пымалла. Çитменлĕхсене тĕплĕн палăртмалла, вĕсене хăвăртрах пĕтерме массăна мобилизацилемелле.

Кашни культурăн вăрлăхне тĕплĕн тĕрĕслемелле, яровизаци тумалли хатĕрсене пăхса тухмалла. Колхоз правленине çуракинчи ĕç планне тума пулăшмалла. Кашни ĕç хатĕрĕпе интересленмелле. Çуракине пур енĕпе те тĕплĕнрех хатĕрленсе çитме колхозниксене васкатмалла.

С. Сергеев.

КОМАНДОВАНИ ЯНĂ ÇЫРУПА ХАВХАЛАНСА

Екатерина Романова фронтри чаçăн командованинчен саламлă çыру илчĕ. Командовани çапла çырать:

«Хисеплĕ Екатерина Романовна!

Сирĕн упăшкăр Илья Федорович Федоров тăракан рота командованийĕ Сире саламлать тата хăвăрăн мухтавлă упăшкăршăн тав тăвать. Сирĕн упăшкăр пирĕн ротăна килнĕренпе хăйĕн паттăрлăхне, тăшмана чĕререн курайманнине, тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕррине кăтартрĕ. Вăл командовани панă боевой задачисене яланах чыслăн, мухтавлăн пурнăçлать. Пирĕн чаçра ăна пурте юратаççĕ, хисеплеççĕ. Хĕрлĕ Çар сирĕн упăшкăр пек çынсемпе тивĕçлипе мухтанать. Сирĕн упăшкăр пек паттăр мухтавлă воинсемпе эпир хамăр çĕршыва ирсĕр тăшмансенчен тасатма пултаратпăр.

Пирĕнтен салам йышăнăр! Сывă пулăр!

Рота командирĕ-гвардии старши лейтенанчĕ Захаров».

Совет правительстви çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Илья Федорович Федорова «За отвагу» медальпе награадăланă.

Федоров Илья — Вăрмар районĕнчи Хоруйĕнчи «Пионер» колхозран. Вăл 1900 çулта çуралнă. Унăн килĕнче ултă çын пурăнать: ватă ашшĕ, амăшĕ, арăмĕ тата 3 ачи. Екатерина Романовна упăшки фронта кайнăранпах колхозра конюх пулса ĕçлет. Федоров ашшĕ, 70 çултан иртнĕ пулсан та, колхозра тăрăшса ĕçлет.

Екатерина Романовна командовани патне ответлă çыру ячĕ. Çав çырура вăл унăн упăшки мухтава тивĕçлĕ пулнăшăн савăнать, командованине тав тăвать тата колхозра Сталин юлташ приказĕ çине ответлесе ĕç тухăçне 2—3 хут ÿстерсе ĕçлеме тупа тăвать.

А. Иванов.

Комсомолецсем ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ

Комсомолăн Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» (Калинински район) колхоз çумĕнчи пуçламăш организацийĕнче 11 комсомолец тăрать. Вĕсем пурте колхоз производствинче ĕçлеççĕ.

Комсомолецсемпе колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Л. Гладков, Л. Власов тата ытти комсомолецсем те Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене тата тĕнчери лару-тăру çинчен колхозниксен килĕсене кайса ăнлантарса параççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем колхоз производствинче те активлăн хутшăнса ĕçлесе ытти колхозниксене пример кăтартаççĕ. Кăçал комсомолецсем Л. Гладков 75 ĕçкунĕ, И. Якимов 60 ĕçкунĕ ытла, П. Тимофеев 65 ĕçкунĕ ĕçлесе турĕç. Комсомолецсем И. Якимов колхоз лашисене пăхать. Вăл пăхакан лашасем уйрăмăнах самăр.

Май уяве уменхи социализмла ăмăрту

ĂМĂРТУ АНЛĂН САРĂЛСА ПЫРАТЬ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр., телефонпа). Районри предприятисем Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Март уйăхĕнчи плана «Большевик» завод коллективĕ 115 процент, райпромкомбинат 127 процент, «Труженик» завод 125 процент тултарчĕç. Çавăн пекех «Комбинат» завод райпищекомбинат тата ытти лайăх предприятисем уйăхри плана ирттерсе тултарчĕç. Çĕршыва фронта планран ирттерсе темиçе çĕршер пин тенкĕлĕх продукци туса пачĕç. Халь çак предприятисенче май уявĕ умĕнхи ăмăрту тата анлăрах çаралса пырать.

Паланри катка-пичке тăвакан тата хăма хăтлĕ, çуракан завод март уйăхĕнчи плана 104,5 процент тултарса пулсан, апрель уйăхĕнчи плана 140 процент тултарма, продукци хăйне ларакан хакне 5 процент чакарма, чĕртавара 3 процентран кая мар перекетлеме, пĕтĕм продукцие «лайăх» тата «отлично» пахалăхпа туса кăларма обязательство илнĕ.

Х. Лисин.

ХĔРАРĂМСЕМ — МАЛТИ РЕТРЕ

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Паланри катка-пичке тăвакан завода май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту çаралса пырать. Коллектив çĕнĕ çитĕнÿ тунипе, апрель уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнипе кĕтсе илме хатĕрленет.

Ăмăртура уйрăмах хĕрарăмсем пример кăтартаççĕ. Рамщица Леппева тĕслĕхĕн, техникăна лайăх тĕпченсе çитнĕ май, кашни вăхăтра пĕр брак тумасăр ĕçлет, нормăна 130—140 процент тултарать. Унăн подручнăйĕ Горбушкина та ĕçе тĕплĕн тăвать, вăл хăйне пĕрле ĕçлекен винтовщица Кузинăна ăмăртса нормăна ытлашшипех тултарса пыма вĕрентет.

Юлашки вăхăтра специальноçсене станочница Романова, навалищица Кутузова, пилотчи Кузина юлташсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Вĕсем март уйăхĕнче, вăтамран илсен, ĕç тухăçлăхне 25—50 процент ÿстерсе ĕçленĕ. Ăмăртăва сарса пынă май пур участоксенче те çĕнĕ çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Йывăç турттаракансем хушшинче Данилова юлташ хăйне панă задание кашни кунах ирттерсе тултарать.

Çĕнĕ çĕре каяс текенсене пĕлсе тăма

КАМЧАТКА

Камчатка — пирĕн çĕршывăн чи интереслă районĕсенчен пĕри. Унта пуянлăх питĕ нумай: тимĕр, нефть, çĕркăмăркĕ, вăрман, хаклă тирлĕ кайăксем, пулă тата ытти те.

Çуллан çулах унта ялхуçалăх çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырать. Камчаткăра тулă, урпа, сĕлĕ, ÿсет, çĕрулми, помидор, арбуз, кавăн т. ыт. те пулаççĕ.

Камчаткăри юханшывсенче кулĕсенче лосось-кета, горбуша, хĕрлĕ пулă тата ытти хаклă пулăсем пур. Камчаткăри шывсенче тата çакан пек пулăсем нумай: голец, ленок, кÿлĕри форель, карпус, çăртан, уланкă, шамба. Тинĕсри пулăсенчен çакăн пек питĕ нумай: сельдь, треска, комбала, навага, корюшка, новага т. ыт. те. Камчатка тăрăхĕнче тинĕске кит та пур. Камчатка вăрманта та пуян. Анчах çак пуянлăхсемпе усă курма унта ĕç вăйĕ çитмест. Çавăнта унта çынсем нумай кирлĕ.

Юлашки çулсенче Камчаткăра пулă промышленноçĕ вăйлăн аталанать. Петропавловск хулинче холодильниксем, консерва заводĕсем тăваççĕ.

Нисăтри Хĕвелтухăçĕнче крабсем тытмалли вăйлă флотили тунă. Крабсем тытмалли кусса çÿрекен «Всеволод Сибирцев» ятлă заводра, крабсенчен консерва тăвакан заводра — 650 çын ĕçлет. Вăл карапзавод çинче 5 столовăй, 4 мунча, типографи, клуб, радиоузел т. ыт. те пур.

Пулă промышленноçĕн рабочийсене ĕç кунĕ хыççăн лайăх çурттсене, рабочи поселоксене канма пулать. Вăл çуртсенче электричество, çутти, радио пур. Пулă заводсем çумĕнче пур çĕрте те пуçламăш шкулсем, амбулаторисем, клубсем, радиоузелсем пур. Культура ĕçĕ вăл пысăк тимлĕхпе уйрăмах ÿсет.

Пулă промышленни рабочисем, тĕрлĕ флотилисен командисем, пулă тытакан колхозсем колхозниксем тухăçлă ĕçлеççĕ, пулă пурнăçпа пуранаççĕ.

Патша Российĕнчи пушă та тискер вырăн шутланнă Камчатка Совет Союзĕнче промышленноçлă, культурăллă, ÿсе пыракан край пулса пырать.

Воробьев,

РСФСР Совнаркомĕн инспекторĕ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Комсомолецсем колхоз ĕçне хутшăнмаççĕ

ТАВАЙ. Тăрмайри Ленин ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем пулă çак пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва тухса ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ коммунист Д. Григорьев юлташ комсомолецсен ĕçне хаклать. Вĕсене кирек мĕнле ĕç те шанса парать. Комсомолецсем те хăйсем те колхоза ытлан хăрушшăн пулăшаççĕ. Комсомол организацин секретарĕ П. Иванов колхоза агротехник пулса ĕçлет. Комсомолецсем пурте колхоз производствинче ĕçлеççĕ. Комсомолка М. Григорьева иртнĕ çулта 153 ĕçкунĕ тунă. А. Платонова комсомолец 1-мĕш бригадăна ертсе пырать. Ун бригади çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. Коммунистсем комсомолецсем тивĕçлĕ ĕçлени пулса колхоз çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ.

Кармалти «Комсомолец» колхоза 5 комсомолец. Вĕсем пурте ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Спиридонов юлташ — колхоз счетоводĕ, М. Муланова — учительница, Н. Кладкова — кладовщик, Е. Андреева — доярка, А. Ласточкина — колхозниксем стахановка. Комсомолецсем пурте колхозри агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Колхоза пур ĕçре те пулăшса пыраççĕ. Çавна пула колхоз агротехникăна çирĕп пăхăнса ĕçлесе пырать. Акмалли çĕр лаптăкĕ çине çуллен нумай минерала удобрени кăларçĕç.

Анчах та комсомолăн хăшпĕр пуçламăш организацийĕсене ситменлĕхсем те нумай-ха. Вăрман Хĕрринчи «Красное Сормово» колхозри пуçламăш организаци (секретарĕ М. Петрова) колхоз ĕçĕсене сахал интересленет. Колхозри комсомолецсем колхоза пулăшма пымаççĕ. Колхозра пĕтĕмпе 6 комсомолец. Вĕсем пурте колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлемеççĕ. Колхоз авăн çапма пĕтермен. Комсомолецсем авăн çапнă çĕре хăйсем те тухмаççĕ. Колхоз кăçалхи çурака тивĕçлипе хатĕрленсе çитмен. Сĕлĕ вăрлăхĕ 60 центнер, пăрса 10 центнер çитмест. Ялхуçалăх машинисем юсаса пĕтермен. 3 сеялкăран пĕрне те ремонтламан. Лаша тавраш çитмест. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини начар. Комсомол организацин секретарĕ М. Петрова çак çитменлĕхсене кĕрешмест. Комсомолецсем колхоза ĕçлес вырăнне ĕçсе çÿреççĕ.

Колхозниксем хушшинче агитацилĕ-массăллă ĕçе кирлĕ пек ирĕкелемен. Вĕсем хаçат-журналсенчи çĕнĕ хыпарсене вуласа кăтартмаççĕ. Колхоза 5 уйăх хушши стена хаçачĕ тухман.

Комсомолецсем хушшинче Мускав облаçĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен çырăвне, комсомол активĕ ялхуçалăхне малта пыракан çамрăксен республикăри канашлăвĕ Чăваш республикинчи комсомолецсемпе комсомолкăсене, ялти мĕнпур çамрăксене чĕнсе калани сÿтсе явман.

ВЛКСМ райкомĕ те (секретарĕ Яковлева юлташ) çакнашкал начар ĕçлекен пуçламăш организацисене тивĕçлĕ пулăшу памасть.

В. Веселов.

Граната ывăтмалли ăмăртăва хастарлăн хутшăнар

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене граната ывăтма вĕрентес та ГТО нормисене парас ĕçе массăллăн хутшăнтармашкăн ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕ апрелĕн 15-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче республикăра граната ывăтмалли заочнăй ăмăрту туса ирттерме йышăннă.

Ăмăрту программинче: 1) гранатăна аяккарах ывăтасси (ура çинче тăрса тата выртса), 2) гранатăна «окопа» ывăтасси (чĕркуçленсе ларса).

Комсомолпа физкультура организацийĕсен çак ăмăртăва ирттерме халех хутшăнмалла. Командăсем организацилемелле, тренировкăсем тумалла, ăмăртăва пур енчен те лайăх ирттерме хатĕрленмелле.

Çак ĕçре физкультура организацийĕсем, ирĕклĕ спорт обществисен та ирттермесĕрех, спорт коллективĕсене кайса ĕçе хастарлăн тытăнмалла. Ĕçĕн ăнăçлăхĕ чылай енчен вĕсенчен, çамрăксене вĕсем хăйсен опытне пама пултарнинчен килет.

Йĕлтĕрлĕ кросра хастарлăн хутшăнса ĕçленĕ руководительсен граната ывăтма вĕрентес тĕлĕшпе те вăйлăн ĕçлемелле.

Физкультура тата всевобуч организацийĕсен, партипе комсомол организацийĕсем пулăшса пынипе, çак задачăна ăнăçлăн пурнăçласси шĕн кĕрешмелле.

В. Никишева,

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ.

Вăрçă хыççăнхи апат-çимĕç ыйтăвĕсем тăрăх пĕрлешÿллĕ нацисен конференцине пухасси

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, США государственнăй департаменчĕ пĕрлешÿллĕ нацисенчен пуринчен те, çавăн пекех тата Боливирен, Колумбирен, Чилирен, Эквадортан, Парагвайран, Перуран тата Венецуэлăран апрелĕн 27-мĕшĕнче США-ра апат-çимĕç ыйтăвĕпе уçăлакан конференцие представительсем яма ыйтнă. Корреспондент кăтартса панă тăрăх, конференцие Аргентинăна чĕнмен, мĕншĕн тесен вăл тĕнĕл держависемпе çыхăну тытать.

Государственнăй департамент чĕннĕ çĕршывсем патне çапла çырса пĕлтернĕ: Пĕрлешÿллĕ Штатсен правительстви, пĕрлешÿллĕ нацисен тата вăрçăра вĕсемпе пĕрлешсе кĕрешекен нацисен вăрçăра татăклă çĕнтерни хыççăн тухса тăракан экономика ыйтăвĕсене халĕ пĕрле сÿтсе-явни питĕ вырнаçуллă пулнă пулĕччĕ, тесе шутлать.

Çаксене шута илсе тата çак ĕçри пирвайхи утăм вырăнне шутласа, США правительстви апрелĕн 27-мĕшĕнче, США-ра, пĕр-пĕр тивĕçлĕ вырăнта, апат-çимĕç тата ялхуçалăх продукчĕсем пирки пулакан конференцие сирĕн (правительство ячĕ) правительствăран çав конференцие тивĕçлĕ специалистсем яма ыйтать.

Çак конференцире тĕрлĕ ыйтусем тăрăх пĕр-пĕринпе калаçса таталмашкăн тата тĕрлĕ ыйтусем тăрăх пĕр-пĕрне информацилемешкĕн çак ыйтусене татса пама кирли тата май пурри пирки пĕтĕмĕшпе килĕшмелле:

1) апат-çимĕç производстви пирки, импортпа экспорт пирки вăрçă хыççăнхи тапхăрта тăракан плансемпе шухăшсем; кашни çĕршывăх çав çĕршывĕн экономикăна майĕпен аталантарса пырса потреблени вiçине хăпартасси; çак ыйтусем вĕсем нихăш енчен те пулăшу парас ыйтупа çыхăнса тăмаççĕ;

2) пĕтĕм тĕнчери мероприятисем урлă уйрăм государствăсен политикине пулăшса, пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесе апат-çимĕçе лайăхлатса потреблени виçине ÿстермелли майсем;

3) апат-çимĕç производствине йĕркелес тата ялхуçалăхĕн ытти питĕ кирлĕ çимĕçĕсене хатĕрлес шутпа пĕтĕм тĕнчипе килĕшÿсем тăвасси тата çав ĕçпе уйрăм оргăнсем тăвасси. Çавăн пекех тата пĕтĕм тĕнче валли çавăн пек çимĕçсем хатĕрлесе вĕсен хакĕсене потребитель валли те, туса хатĕрлекенĕ валли те тивĕçлĕ тăвасси;

4) пĕтĕм тĕнчери çĕршывсене кирлĕ апат-çимĕçпе ялхуçалăх çимĕçĕсене тăратас шутпа тата хăйсенчен ытлашши çимĕçсене сутма тивĕçлĕ рыноксем тытас шутпа суту-илÿ, финанс тата ытти тĕлĕшпе килĕшÿсем тăвасси.

* * *

ТАСС илнĕ сведенисем тăрăх, США-ра пĕрлешÿллĕ нацисен вăрçă хыççăн ялхуçалăх çимĕçĕсен производствине организацилес тĕлĕшпе пухăнакан конференцине Совет Союзĕн представителĕсене яма США правителаьстви ыйтнине СССР правительстви йышăннă.

ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ АПАТ-ÇИМĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĂРĂХ ПУЛМАЛЛИ КОНФЕРЕНЦИЕ ХУТШĂНМА АНГЛИЯ КИЛĔШНĔ

ЛОНДОН, мартăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: вăрçă хыççăнхи апат-çимĕç ыйтăвĕсем тăрăх апрелĕн 27-мĕшĕнче США-ра пухăнакан конференцие хăйсен представителĕсене яма Америка правительстви чĕннине Англи правительстви йышăннă.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн çурçĕр участокĕнче союзниксен войскисем Седженанерен çурçĕрелле тата хĕвелтухăçнелле малалла куçса пынă.

Французсен «верблюд корпусĕ» Шат-Джеридаран кăнтăртарахра Кебели пунктне йышăнса илнĕ. Уссельти районĕнче французсен малта пыракан чаçĕсем Пишон еннелле темиçе километр малалла куçнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ, каялла чакакан Роммель войскисене хăваласа, Габесран 40 километр малалла куçнă.

Италин нумай порчĕсенче пулăçсен лодкисене, буксирнăй пароходсене тата ытти пысăк мар кимĕсене те тытса илнĕ. Вĕсене пухса караван туса Сицили утравне ямалла тунă. Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, тĕнĕл держависем çав флотпа Италипе Германи войскисене Тунисран эвакуацилес тĕлĕшпе усă курма шутлаççĕ.

ОРХУСРИ ПĂЛХАНУСЕМ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс Тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Орхус ятлă Дани хулинче, Германи войскисен тискерлĕхне пула, пысăк пăлхавсем пулса иртнĕ. Хула витĕр тухакан нимĕç çар чаçĕсем хулари магазинсемпе складсене пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Пăлханусен тепĕр сăлтавĕ çакăнта пулнă: гитлеровецсем тĕрлĕ ăпăр-тапăр çынсенчен пухса тунă датчансен «добровольчески корпус» текен корпусри салтакĕсем йĕркесĕрленни пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çурхи шыв юхнă вăхăтра автомашина çулĕсемпе çÿреме чарасси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕн постановленийĕ тăрăх, автомашинăсем çÿрекен çулсене ванасран сыхлас тĕлĕшпе çурхи шывсем юхнă вăхăтра вĕсем тăрăх çÿрессине чарма йышăннă.

Хусанпа Горький хушшинчи Чăваш республики тăрăх иртекен çулпа апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа майăн 10-мĕшĕччен пур йышши автомашинăсемпе лашасем çÿрессине те чарнă.

Шупашкар — Канаш — Патăръел тата Çĕрпÿ — Çĕрпÿ станцийĕ çулĕсем тăрăх апрелĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа апрелĕн 25-мĕшĕччен çăмăл машинăсене тата пĕр тонна çурă тиесе çÿрекен машинăсене çеç çÿреме ирĕк панă.

Колхоз çамрăкĕсен çуракинчи задачисем

Пирĕн çĕршывăн кăнтăр районĕсенче çураки ĕçне тытăннă та ĕнтĕ. Çĕпĕрти, Уралти, вăтаçĕр облаçсенчи районсенче çуракине ирттерме çине тăрсах хатĕрленеççĕ.

Çураки — пирĕн патриотла тĕп ĕç тесе ялти комсомолецсемпе çамрăксем тĕрĕс калаççĕ.

Мĕншĕн-ха çуракине ăнăçлăн ирттерессине комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен патриотла ĕçĕ теке шутлаççĕ? Патриотизм тени вăл тăван çĕршыва, тăван халăха юратса, ăна пĕтĕм чун-чĕрепе парăннине пĕлтерет. Çăкăр, пахча-çимĕç, çĕрулми пире тăшманпа çапăçнă çĕрте танксем, самолетсем, тупăсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшал пекех кирлĕ. Ялхуçалăх продукчĕсем Хĕрлĕ Çар боецне, çар заказне пурнăçлакан рабочие, уйхирте ĕçлекен колхозника тата ачасене тăрантарма кирлĕ. Техника культурисем оборона промышленноçне чĕр тавар парса тăма кирлĕ.

Большевиксен партийĕпе совет правительстви кăтартса панă тăрăх, ялхуçалăхĕ умĕнче кăçалхи çул пур культурăсен тухăçлăхне те ÿстерес задача тăрать. Çав задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртесси чи малтан çурхи ĕçсене мĕнле ирттернинчен килет. Çуракине вăхăтра пуçласа вĕçлемесен, япăх вăрлăхпа акса хăварсан, чипер сухаласа хăвармасан, тырпулсăр юлатăн. Вăхăтра тата лайăх акса хăваратăн — пысăк тухăçлă тырпул илетĕн. «Мĕн акатăн, çавна выратăн», — тенĕ ваттисем. Çуракине кĕске срокра, агротехника правилисене пăхăнса ăнăçлăн ирттерни — патриотла пысăк ĕç тунине, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Хĕрлĕ Çара пулăшу панине пĕлтерет.

Колхозсемпе совхозсенче çурхи ĕçсен тĕп йывăрлăхĕ хĕрарăмсемпе çамрăксем çине ÿкет. Комсомолăн ялти организацийĕсен татăклă тĕп задачи çакăнта тăрать те ĕнтĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн пыракан кĕрешÿре вĕсен чăн-чăн вожаксем пулма, пĕтĕм çамрăксене организацилекен паттăрсем пулма пĕлмелле.

Епле тата мĕн тумаллине Мускав облаçĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен çырăвĕнче, вăл канашлура М. И. Калинин юлташ тухса каланă сăмахра, ытти облаçсемпе районсенчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен çырăвĕсемпе вĕсем чĕнсе каланисенче тĕплĕн кăтартса панă.

Комсомолец çине пирĕн, тивĕçлипех, совет çамрăкĕсен малта пыракан представителĕ çине пăхнă пек, пăхаççĕ. Çавăнпа та халĕ колхозра, совхозра, МТС-ра ĕçлекен комсомолецсем умне пысăк требованисем лартаççĕ. Вĕсен уйхирте стахановла ĕçлесе пример кăтартмалла, çамрăксен чăн-чăн организаторĕсемпе вĕсене ертсе пыраканĕсем пулмалла. Тĕрлĕ йывăрлăхсем пур пулин те эпир çуракине мĕншĕн ăнăçлăн ирттерме тивĕçлине колхозниксене ăнлантарса памалла, çитменлĕхсемпе килĕшмелле мар, çине тăрса ĕçленипе вĕсене сирсе ямалла, колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, яланах, пур çĕрте те ĕçе пуçарса яраканĕ пулмалла, çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçре пур майсемпе те усă курмалла.

Умри тĕллеве пурнăçлассишĕн мĕнле кĕрешмеллине тĕслĕхне пирĕн боецсем, командирсем, политработниксем кăтартса параççĕ. Пирĕн çамрăксем çавсенчен пример илмелле.

Сталинградра паттăррăн хÿтĕлекенсенчен пĕри Василий Зайцев, — ăна халь Совет Союз Геройĕн ятне панă, — ахаль винтовкăран çеç персе нимĕçсене вĕлернипе, унпа лайăх усă курма пĕлнĕ пулин те, çырлахман. Вăл снайпер винтовки çине куçнă. Малтанхи кунсенче унăн ĕç ăнса пыман. Анчах Зайцев тепле пулсан та винтовкăпа отлично пеме вĕренесшĕн пулнă. Хĕрсе пыракан çапăçу вăхăтĕнче вăл пĕрмаях пеме хăнăхса пынă. Унăн ĕçĕ питĕ ăнăçла вĕçленнĕ. Сталинград патĕнчи çапăçусенче Василий Зайцев 247 нимĕçе вĕлернĕ.

Ялти комсомолецсен пурин те, вĕсемпе пĕрле ялти мĕнпур çамрăксен, пирĕн боецсем, командирсемпе политработниксем хăйсен тĕллевне — нимĕç фашисчĕсене пĕр чарăнмасăр вĕлерсе пырассине пурнăçланă пекех, тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн кĕрешмелле.

Колхозри хăшпĕр комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçĕнче пит пысăк çитĕнÿсем тÿрĕç. Калинин облаçĕнчи Завидовски районри «9-е января» колхозра, иртнĕ çулта, комсомолецсем пулăшнипе гектартан 15 центнер тĕштырă тата 170 центнер çĕрулми туса илнĕ. Рязань облаçĕнчи Сараево районĕнчи «Победитель» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешекен звени гектартан 29-шар центнер тĕштырă туса илнĕ. Ялти комсомол организацийĕсем пурте, çав шутрах Василий Зайцев çуралнă Челябинск облаçĕнчи комсомолецсем те, тырпул тухăçлăхĕшĕн çавăн пекех çине тăрса кĕрешнĕ теме пулать-и? Çук, апла калама пулмасть.

Çуракине ăнăçлăн ирттерес ĕçре кашни сехетех питĕ хаклă. Ялти çамрăксемпе пĕрле пысăк тухăçлă тырпулшăн кашни кунах татăклă ĕçсем тăвасси — комсомолецсен чысĕ пулса тăрать. Халех тумалли ĕçсем кашни колхозрах, совхозрах, МТС-рах питĕ нумай: вăрлăх пухса хатĕрлесси, вăл шутрах çĕрулми тăррисене касса хатĕрлесси, инвентаре, лаша таврашне, урапа таврашне хатĕрлесси, вырăнти удобренисене кăларасси т. ыт. те. Çуракине ăнăçлă ирттерессишĕн — пахалăх енчен лайăх, сроксем енчен правительство кăтартнă пек вăхăтра ирттерессишĕн — тăрăшни кăна кирлĕ.

Паллах, çакăн пек пысăк задачăна пурнăça кĕртесси ялти çамрăксене партин вырăнти оргăнĕсем енчен вăйлăнрах ертсе пыма ыйтать. Ялти комсомол организацийĕсене вĕсен яланах пулăшса пымалла.

Ялти комсомол организацийĕсене çирĕплетме кирлĕ. Çак ыйтăва сÿтсе явса ВКП(б) Казахстан Центральнăй Комитечĕ ялсенчи комсомол ĕçне партин çамрăк членĕсене 300 çынна тата хуласенчен комсомолăн 2.000 активистне ямалла тунă. Партин Тамбов обкомĕ йышăннă тăрăх, ял районĕсенче пуринче те парти активĕ пулăшнипе комсомол активĕн вĕренĕвне организациленĕ. Çав шутпала кĕске вăхăтлăх семинарсем ĕçлеççĕ. Парти райкомĕн бюровĕнче колхоз ĕçĕсем çинчен сÿтсе-явнă чухне райкомол секретарьне çеç мар, комсомолăн пуçламĕш организаци секретарьне чĕнесси те йăлана кĕнĕ. Райком секретарĕсем е бюро членĕсем райкомол бюровĕн ларăвĕсенче пулаççĕ.

Колхозсенчи йышлă мар комсомол организацийĕсене çирĕплетес тата çĕнĕ организацисем тăвас шутпа партин Калинин тата Ярославль облаçĕсенчи организацийĕсем колхозсене парти работникĕсене чылай ячĕç. Ку ĕçрен усси часах палăрĕ. Сăмахран, Калинин облаçĕнчи Удомель районĕнче, пĕр уйăхран сахалтарах вăхăтра, колхозсенче комсомолăн 36 организацийĕсене çĕнĕрен организациленĕ. Ярославль облаçĕнчи Чухлома районĕнче — 25 организаци тунă. Ярославль облаçĕнче пĕр уйăх хушшинче колхозсенче комсомолăн 116 организацине туса йĕркеленĕ. Комсомол ретне çамрăк колхозниксем çĕнĕрен пĕр пин çын ытла кĕнĕ.

Парти райкомĕсем нумайĕшĕсем çуракине ирттерес ĕçре пулăшма колхозсене парти работникĕсене яраççĕ. Вĕсенчен кашниех колхозри комсомол организацийĕсене практикăллă пулăшу парас пулсан, организаципе политика тĕлĕшĕнчен çирĕпленме пулăшас пулсан, вара ялти комсомолецсем пĕтĕм çамрăксем çине влияни парасси татах та ÿснине курнă пулаттăмăр эпир.

Çамрăксене воспитани парасси çине, вĕсене политикăпа хуçалăх пурнăçне хастарлăн хутшăнтарас ĕç çине большевиксен партийĕ яланах пĕтĕм партин тата государствăн паллă ĕçĕ çине пăхнă пек пăхнă. Колхозăн хуçалăх пурнăçĕнче ялти çамрăксен вырăнĕ ÿссе пынă вăхăтра çамрăксене воспитани парас енĕпе пыракан партиллĕ ĕç, çамрăксене татăклă ĕçсем тума мобилизацилесси татах та ытларах паллă вырăн йышăнать.

Совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă пирĕн çамрăксем хамăр тăван çĕршыва, большевиксен партине, Сталин юлташа çавтери тарăхăн юратса, пĕтĕм чунчĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕ. Комсомолецсем ертсе пынипе ĕçлекен ялти çамрăксем çураки ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерес тĕлĕшпе мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвасси пирки иккĕленмелли çук. Мĕншĕн тесен çамрăксем çĕршыв кунçулĕшĕн хăйсен ответлăхне туяççĕ, эпир çĕнтерессине çирĕппĕн ĕненсе тăраççĕ.

Н. МИХАЙЛОВ,

ЦК ВЛКСМ секретарĕ.

ЧАССР Совнаркомĕ мартăн 19-мĕшĕнче йышăннă тăрăх, 1943 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче Шупашкарта, Наркомфин çуртĕнче, Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисенчи выляса илмелли вкладсем тăрăх выигрышсен пĕрремĕш тиражĕ пулса иртет.

Тираж каçхине 19 сехетре пуçланать.

Госкредитпа перекет ĕçне пулăшакан комиссисен членĕсене тата ĕççыннисене пыма чĕнеççĕ.

Тираж иртгернĕ çĕре кирек кам та кĕме пултарать.

Чăваш АССР-ĕнчи госкредитпа перекет кассисен управленийĕ.

Организацисемпе учрежденисене пурне те пĕлсе тăма

СССР Наркомфинĕ 1943 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче 72-мĕш номерлĕ хутпа кăтартса панă тăрăх, 1943 çулхи майăн 1-шĕнчен кая юлмасăр Чăваш АССР-ĕнчи учрежденисен, организацисен тата предприятисен тивĕçлĕ финанс органĕсенче хăйсен штачĕсене, ĕçукçи фончĕсемпе ставкисене тата администрацине хуçалăх сметисене регистрацилемелле.

Регистрапи СССР Наркомфинĕ 1941 çулхи мартăн 31-мĕшĕнче (№ 245/36) кăларнă инструкци тăрăх пулса иртет.

2—1

Наркомфин.

Çул тăвакан машинăсемпе тата тракторсемпе ĕçлеме вĕрентекен курса вĕренме илеççĕ, вĕренессе пĕр уйăх таран вĕренмелле.

16 çултан кая мар çитĕннисене тата 4 çултан кая мар вĕреннисене илеççĕ. Вĕренекенсене уйăхне 150 тенкĕ стипенди, общежити параççĕ тата столовăй пулать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Калинин урамĕ, 51, кадрсен пайĕ. 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен пĕлме пулать.

Çавăнтах тата старши экономист, главнăй бухгалтерсем тата бухгалтер-ревизорсем кирлĕ.

3—2

Çыхăну Халăх Комиссариачĕн чăваш управленине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: экономист, автотранспорт инспекторĕ. Специалистсем çук пулсан, 9—10 çул вĕреннисене те илеççĕ. Хăй тĕллĕн уйрăм баланс тăрăх районсенче ĕçлеме старши бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа кадрсен пайĕнче ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Ленин урамĕ, 1 (3-мĕш хутра).

Шупашкар районĕнче «Ким» колхозăн кĕсри сухалнă; тĕсĕ хура, çамки çинче пÿрне пусăмĕ пек шурă палла пур, 15 çулта, çÿллĕшĕ 130 сантиметр. Тупакансене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Сĕнтĕр районĕ, Кубасински ялсовечĕ, колхоз «Ким».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 132 Типография № 1. Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.